ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ХУЛА СТРОИТЕЛЬСТВИН ЁÇ-ХЁЛНЕ ЙЁРКЕЛЕССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче хула строительствин ĕç-хĕлне йĕркелесси çинчен" 2007 çулхи çĕртме уйăхĕн 4-мĕшĕнчи 11 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2007, 73 №; 2008, 77 №; 2009, 80 №; 2010, 85 №; 2011, 91 №; 2012, 94 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; 2014, 12 №; 2015, 9 №; 2016, 3, 12 №-сем; 2017, 7, 11 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, авăн уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ; 2020, ака уйăхĕн 29-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000251 №) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 3 статьяра:

1-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

"1) Раççей Федерацийĕн икĕ е ытларах субъекчĕн территорине планламалли схемăна, Чăваш Республикин территорине планламалли схемăсене çирĕплетесси;";

4-мĕш пунктра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас, ", çавăн пекех вĕсене кĕртнĕ улшăнусене" сăмахсене кăларса пăрахас;

7-мĕш пунктра "Раççей Федерацийĕн икĕ е ытларах субъекчĕн территорине планламалли схемăсен проекчĕсем" сăмахсене "Раççей Федерацийĕн икĕ е ытларах субъекчĕн территорине планламалли схемăн проекчĕ" сăмахсемпе улăштарас;

7^1-мĕш тата 9-мĕш пунктсем хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас;

11-мĕш пунктра "поселенисен" сăмаха "муниципаллă округсен" сăмахсемпе улăштарас;

11^4-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органне" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органне" сăмахсемпе улăштарас;

11^5-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органне" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органне" сăмахсемпе улăштарас;

2) 4 статьяра:

ятĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

пĕрремĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

1-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

"1) Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе палăртнă йĕркепе Раççей Федерацийĕн икĕ е ытларах субъекчĕн территорине планламалли схемăн, Чăваш Республикин территорине планламалли схемăсен проекчĕсене, хула строительствине проектламалли регион нормативĕсене хатĕрлессине, килĕшсе татăлассине тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне çирĕплетме тăратассине тивĕçтерет;";

2-мĕш пунктра "документсен" сăмаха "схемăсен" сăмахпа улăштарас;

2^1-мĕш пунктра "документсен проекчĕсем" сăмахсене "схема проекчĕ" сăмахсемпе улăштарас, "асăннă проектсене туса хатĕрленĕ" сăмахсене "асăннă проекта туса хатĕрленĕ" сăмахсемпе улăштарас;

4-мĕш пунктра:

"а" çум пункта çакăн пек çырса хурас:

"а) Раççей Федерацийĕн Хула строительствин кодексĕнче палăртса хăварнă тĕслĕхсенче Раççей Федерацийĕн территорине планламалли документсен, Раççей Федерацийĕн икĕ е ытларах субъекчĕн территорине план-

ламалли схемăн, Чăваш Республикипе чикĕленекен Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен территорине планламалли схемăсен проекчĕсем тĕлĕшпе;";

"ă" çум пунктра "поселенисен" сăмаха "муниципаллă округсен" сăмахсемпе улăштарас;

7-мĕш пунктра "районсен" сăмаха "округсен" сăмахпа улăштарас;

7^1-мĕш пунктра "районсен" сăмаха "округсен" сăмахпа улăштарас;

8^1-мĕш пунктра "поселенисен" сăмаха "муниципаллă округсен" сăмахсемпе улăштарас;

8^2-мĕш пунктра "районсен" сăмаха "округсен" сăмахпа улăштарас;

9^1-мĕш пунктра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

3) 5 статьяра:

2^1-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

4-мĕш пайра "районăн, поселенин" сăмахсене "округăн" сăмахпа улăштарас;

7-мĕш пайăн 1-мĕш пунктĕнче "регион" сăмаха "республика" сăмахпа улăштарас;

8-мĕш пайра:

1-мĕш пунктра "районсен, поселенисен" сăмахсене "округсен" сăмахпа улăштарас;

2-мĕш пунктра:

"а" çум пунктра "Раççей Федерацийĕн икĕ е ытларах субъекчĕн территорине планламалли документсемпе" сăмахсене "Раççей Федерацийĕн икĕ е ытларах субъекчĕн территорине планламалли схемăпа" сăмахсемпе улăштарас;

"в" çум пунктра "регион (республика) пĕлтерĕшлĕ историлле поселенисен" сăмахсене "Чăваш Республикин историйĕпе культуришĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ историлле поселенисен (малалла – регион (республика) пĕлтерĕшлĕ историлле поселенисем)" сăмахсемпе улăштарас;

4) 5^1 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"5^1 статья. **Чăваш Республикин территорине планламалли схемăра кăтартмалли республика пĕлтерĕшлĕ объектсен тĕсĕсем**

1. Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе, федерацин конституци саккунĕсемпе, федераци саккунĕсемпе, Чăваш Республикин Конституцийĕпе, Чăваш Республикин саккунĕсемпе, Чăваш Республикин Министрсен Ка-

бинечĕн йышăнăвĕсемпе Чăваш Республики, Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем тытса пымалли ыйтусен шутне кĕртнĕ ыйтусем енĕпе полномочисем пурнăçлама кирлĕ Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономикин аталанăвне палăрмаллах витĕм кӳрекен капиталлă строительство объекчĕсем, ытти объектсем, территорисем республика пĕлтерĕшлĕ объектсем шутланаççĕ.

2. Чăваш Республикин территорине планламалли схемăра республика пĕлтерĕшлĕ çак объектсене кăтартмалла:

1) транспорт (чукун çул, шыв, сывлăш транспорчĕ) сферине кĕрекеннисене:

пурте усă курман чукун çулсене, пурте усă курман технологиллĕ чукун çулсене технологилле çыхăнтарнă чухне тăвакан тата (е) юсаса çĕнетекен чукун çул станцийĕсене, чукун çул вокзалĕсене, чукун çул çинчи пассажирсен чарăну пункчĕсене;

шыв транспорчĕпе груз турттарас, пассажирсем турттарас ĕçе йĕркеленме туса лартнă юхан шыв порчĕсене тата причалсене;

аэровокзала, вертолет площадкисене;

транспортпа логистика комплексĕсене, вĕсене вырнаçтарассине Чăваш Республикин патшалăх программисемпе пăхса хăварнă е вĕсене тăвасси çинчен калакан йышăнăва Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем тунă;

2) регион е муниципалитетсем хушшинчи пĕлтерĕшлĕ автомобиль çулĕсене;

3) муниципалитетсем хушшинчи тата регион шайĕнчи майсăр ларутăрусене, хăй тĕллĕн пулакан инкексенчен, эпидемисенчен асăрхаттармалли тата вĕсен сиенĕсене пĕтерес ĕç сферине кĕрекеннисене:

Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи пушар деповĕсене;

Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи гражданла оборонăн хӳтĕлев сооруженийĕсене;

Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнчи гидротехника сооруженийĕсене;

4) вĕренӳ сферине кĕрекеннисене:

Чăваш Республикин патшалăх вĕренӳ организацийĕсен, вĕренӳ организацийĕсем шутланман тата вĕренӳ енĕпе ĕç-хĕл пурнăçлакан Чăваш Республикин патшалăхăн ытти организацийĕсен вĕрентӳ, производство, социаллă инфратытăм объекчĕсене;

5) сывлăх сыхлавĕ тата социаллă пулăшу парас ĕç сферине кĕрекеннисене:

Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсене пăхăнса тăракан медицина, фармацевтика организацийĕсене;

санаторипе курорт объекчĕсене, вĕсене вырнаçтарассине Чăваш Республикин патшалăх программисемпе пăхса хăварнă е вĕсене тăвасси çинчен калакан йышăнăва Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем тунă;

Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсене пăхăнса тăракан социаллă пурнăçпа сывлăха çирĕплетмелли центрсене;

Чăваш Республикин халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен патшалăх организацийĕсене тата объекчĕсене, çав шутра тăлăх ачасен тата ашшĕ-амăшĕн асăрхавĕсĕр юлнă ачасен организацийĕсене, социаллă пурнăçпа реабилитаци центрĕсене, ватă çынсемпе сусăр çынсен социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центрсене, халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрсене, Чăваш Республикин социаллă пулăшу паракан ытти объекчĕсене, вĕсене туса хурасси çинчен Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем йышăну тунă;

6) физкультурăпа спорт сферине кĕрекеннисене:

1500 тата унтан та ытларах вырăнсемлĕ трибунăсемлĕ стадиона;

пăр аренине, пĕтĕмĕшле 3000 тăваткал метр ытла лаптăклă искусствăллă пăрпа витнĕ катока;

аквапарка, пĕтĕмĕшле 3000 тăваткал метр ытла лаптăклă бассейна;

1500 вырăнлă тата унтан та ытларах вырăнлă специализациленĕ спорт комплексне (теннис центрĕ, туçи йĕлтĕр комплексĕ, лаша спорчĕн центрĕ, ипподром, парăс центрĕ, трек);

спорт енĕпе хатĕрлекен центрсен, спорт шкулĕсен çурчĕсене тата сооруженийĕсене, спорт енĕпе ĕçлекен ытти объектсене, вĕсем Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнче шутланаççĕ е вĕсене тăвасси çинчен калакан йышăнусене Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем тунă;

Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсене пăхăнса тăракан, вĕсенче (вĕсен территорийĕнче) Чăваш Республикин физкультурăпа спорт организацийĕсем вырнаçнă объектсене, официаллă йĕркепе регион шайĕнче тата муниципалитетсем хушшинчи шайра физкультура, физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли тата спорт мероприятийĕсем йĕркелесе ирттерме кирлĕ объектсене;

7) культурăпа искусство сферине кĕрекеннисене:

регион (республика) пĕлтерĕшлĕ культура еткерлĕхĕн объекчĕсене;

архивсене, культурăпа кану объекчĕсене, çав шутра музейсене, курав залĕсене, цирксене, библиотекăсене, фильмсем упранакан çуртсене, кино-, видеопрокат организацийĕсене, театрсене, концерт залĕсене, филармонисене, планетарисене, йăлана кĕнĕ халăх художество пултарулăхне тата промыслисене аталантармалли объектсене, искусство енĕпе вĕренӳ программисене пурнăçлакан вĕренӳ организацийĕсене, вĕсем Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсене пăхăнса тăраççĕ е вĕсене тăвасси çинчен калакан йышăнусене Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем тунă;

культура еткерĕн объекчĕсен территорийĕсене, регион (республика) пĕлтерĕшлĕ истори поселенийĕсен территорийĕсене;

8) туризмпа кану сферине кĕрекеннисене:

туризмпа кану кластерĕсене;

туризм информаци центрĕсене вырнаçтарма палăртнă объектсене;

9) промышленность тата агропромышленность комплексĕн, çут çанталăк ресурсĕсен сферине кĕрекеннисене:

вырăн пĕлтерĕшлĕ çĕр айĕнчи пуянлăхсен лаптăкĕсене;

çĕр айĕнчи пуянлăхсене кăлармалли тата вĕсене тирпейлемелли объектсене;

хăйсен ĕç-хĕлне пĕрлехи производствăпа технологи процесĕ шайĕнче пурнăçлакан промышленность, агропромышленность предприятийĕсене е темиçе предприятие, вĕсене тăвасси çинчен калакан йышăнусене Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем тунă;

индустри (промышленность) паркĕсене;

хăвăрт аталанакан территорисене;

промышленность кластерĕсене;

социаллă пурнăçпа экономика хăвăрт аталанакан территорисене;

ятарлă экономика зонисене;

10) энергетика сферине кĕрекеннисене:

электричество парса тăракан (сывлăшри тата кабельлĕ) линисене, вĕсен проектпа пăхнă номиналлă напряжени класĕ 110 (150) кВпа танлашать;

икĕ тата ытларах муниципаллă пĕрлĕх территорийĕнче вырнаçнă электричество парса тăракан (сывлăшри тата кабельлĕ) линисене, вĕсен проектпа пăхнă номиналлă напряжени класĕ 35 кВпа танлашать;

подстанцисене, вĕсен проектпа пăхнă номиналлă напряжени класĕ 35 кВпа тата 110 (150) кВпа танлашать;

регионти газпа тивĕçтерекен системăсене;

Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăха, Чăваш Республикинчи промышленность предприятийĕсемпе ытти организацисене газификацилемелли регионти çирĕплетнĕ программăсемпе пăхса хăварнă газопровод-отводсене тата газ валеçмелли станцисене;

çут çанталăк газне тата хĕснĕ газа 0,005 МПа шайран тытăнса 1,2 МПа таран пусăмпа куçарса тăракан газ пăрăхĕсене;

11) шывпа тивĕçтерес тата шыва юхтарса кăларас ĕç сферине кĕрекеннисене:

икĕ тата унтан та ытларах муниципаллă пĕрлĕх территорийĕнче вырнаçнă е вырнаçтарма палăртакан шывпа тивĕçтермелли, шыва юхтарса кăлармалли объектсене, çавăн пекех икĕ тата унтан та ытларах муниципаллă пĕрлĕхсен шывпа тивĕçтермелли, шыва юхтарса кăлармалли тытăмĕсене аталантармалли пайра вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен полномочийĕсене пурнăçлама кирлĕ çавнашкал объектсене;

12) Чăваш Республикинче каяшсене тыткалас тĕлĕшпе территорири схемăна кĕртнĕ коммуналлă хытă каяшсене ĕçе ярас, сиенсĕрлетес тата вырнаçтарас ĕç сферине кĕрекеннисене;

13) çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас ĕç сферине кĕрекеннисене:

регион пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсем вырнаçнă территорисене;

сывлăха сиплесе çирĕплетмелли регион пĕлтерĕшлĕ вырăнсене тата курортсене, çавăн пекех вĕсене туса хума, аталантарма тата сыхлассине тивĕçтерме палăртса хунă объектсене;

14) Раççей Федерацийĕн Конституцийĕпе, федерацин конституци саккунĕсемпе, федераци саккунĕсемпе, Чăваш Республикин Конституцийĕпе, Чăваш Республикин саккунĕсемпе, Чăваш Республикин Министрсен

Кабинечĕн йышăнăвĕсемпе Чăваш Республики, Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем тытса пымалли ыйтусен шутне кĕртнĕ ыйтусем енĕпе полномочисем пурнăçлама кирлĕ тата Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономикин аталанăвне палăрмаллах витĕм кӳрекен ытти объектсене тата территорисене.";

5) 7, 7^1 тата 8 статьясем хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас;

6) 10 статьяра:

ятĕнче "поселенисен" сăмаха "муниципаллă округсен" сăмахсемпе улăштарас;

1-мĕш пайра "поселенисен" сăмаха "муниципаллă округсен" сăмахсемпе улăштарас;

2-мĕш пайра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

3-мĕш пайра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

4-мĕш пайра:

2-мĕш пунктра "поселенин е хула округĕн" сăмахсене кăларса пăрахас;

3-мĕш пунктра ", поселени е хула округĕн йышне кĕрекен" сăмахсене кăларса пăрахас;

4-мĕш пунктра "поселенин е хула округĕн" сăмахсене кăларса пăрахас;

5-мĕш пайăн 1-мĕш пунктĕнче "поселенин, хула округĕн" сăмахсене кăларса пăрахас;

6-мĕш пайра:

1-мĕш пунктра:

пĕрремĕш абзацра "поселенин, хула округĕн" сăмахсене кăларса пăрахас;

"б" çум пунктра "хула округĕн тĕп планне" сăмахсене "муниципаллă округăн тĕп планне е хула округĕн тĕп планне" сăмахсемпе улăштарас;

"в" çум пунктра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

2-мĕш пунктра ", поселени е хула округĕн йышне кĕрекен" сăмахсене кăларса пăрахас;

6^1-мĕш пайра "поселени е хула округĕн йышне кĕрекен," сăмахсене кăларса пăрахас, "поселенин, хула округĕн" сăмахсене "муниципаллă округăн, хула округĕн" сăмахсемпе улăштарас;

8-мĕш пайра:

2-мĕш пунктра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

3-мĕш пунктра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

4-мĕш пунктра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

5-мĕш пункт хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

7-мĕш пунктра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

9-мĕш пайра:

1-мĕш пунктра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

2-мĕш пунктра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

3-мĕш пунктра "поселенин, хула округĕн" сăмахсене кăларса пăрахас;

9-мĕш пунктра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас, ", муниципаллă районăн вырăнти пĕлтерĕшлĕ объекчĕсене" сăмахсене кăларса пăрахас;

7) 10^1 статьяна çакăн пек çырса хурас:

"10^1 статья. **Муниципаллă округсен тĕп планĕсенче, хула округĕсен тĕп планĕсенче кăтартмалли вырăн пĕлтерĕшлĕ объектсен тĕсĕсем**

1. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусем енĕпе тата федераци саккунĕсемпе, Чăваш Республикин саккунĕпе, муниципаллă пĕрлĕхсен уставĕсемпе килĕшӳллĕн панă патшалăх полномочийĕсен шайĕнче полномочисем пурнăçлама кирлĕ, муниципаллă округсен, хула округĕсен социаллă пурнăçпа экономикин аталанăвне палăрмаллах витĕм кӳрекен капиталлă строительство объекчĕсем, ытти объектсемпе территорисем вырăн пĕлтерĕшлĕ объектсем шутланаççĕ.

2. Муниципаллă округсен тĕп планĕсенче, хула округĕсен тĕп планĕсенче вырăн пĕлтерĕшлĕ çак объектсене кăтартмалла:

1) халăха электричествăпа, ăшăпа, газпа тата шывпа тивĕçтерсе тăрас, шыва юхтарса кăларас ĕç сферине кĕрекеннисене:

федераци пĕлтерĕшлĕ, республика пĕлтерĕшлĕ объектсен шутне кĕмен, халăха электричествăпа, ăшăпа, газпа тата шывпа тивĕçтерсе тăракан, шыва юхтарса кăларакан объектсене;

2) муниципаллă округăн, хула округĕн чиккисенче вырăн пĕлтерĕшлĕ автомобиль çулĕсемпе транспорт сферине кĕрекеннисене:

пассажир транспорчĕн паркĕсене тата деповĕсене;

муниципаллă округăн, хула округĕн халăх пурăнакан вырăн чиккисенче муниципаллă округăн, хула округĕн вырăн пĕлтерĕшлĕ пурте усă куракан автомобиль çулĕсене тата çавнашкал автомобиль çулĕсем çинче çулйĕр ĕç-хĕлне пурнăçласа тăма пулăшакан объектсене, çав шутра искусствăлла çул-йĕр сооруженийĕсене (кĕперсене, çул урлă хывнă кĕперсене, трубопроводсене, туннельсене, эстакадăсене, хушма сооруженисене);

вырăн пĕлтерĕшлĕ автомобиль çулĕсемпе çыхăнтарнă çул-йĕр сервисĕн объекчĕсене (автозаправка станцийĕсене, автостанцисене, автовокзалсене, техника пулăшăвĕ паракан станцисене, çавăн евĕр объектсене);

3) вĕренӳ сферине кĕрекеннисене:

шкулчченхи вĕренӳ организацийĕсене;

пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисене (Чăваш Республикин территорине планламалли схемăра палăртма тивĕçлĕ организацисемсĕр пуçне);

ачасене хушма пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсене (Чăваш Республикин территорине планламалли схемăра кăтартмалли организацисемсĕр пуçне);

4) физкультура, массăллă спорт тата кану сферине кĕрекеннисене:

физкультура тата спорт енĕпе йышăннă муниципаллă программăсемпе проектсене пурнăçлама, муниципаллă округăн, хула округĕн официаллă физкультура мероприятийĕсене, физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли мероприятийĕсене тата спорт мероприятийĕсене йĕркелесе ирттерме туса лартнă çуртсене тата сооруженисене;

спорт енĕпе хатĕрлекен муниципаллă центрсен, спорт шкулĕсен çурчĕсемпе сооруженийĕсене, спорт тĕллевлĕ ытти объектсене, вĕсем муни-

ципалитет харпăрлăхĕнче шутланаççĕ е вĕсене тăвасси çинчен калакан йышăнăва вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тунă;

муниципаллă округăн, хула округĕн чиккисенче вырнаçнă, ачасен канăвне йĕркелессине тата сывлăхне çирĕплетессине тивĕçтерме кирлĕ объектсене;

спорт залĕсене, çав шутра пурте усă кураканнисене;

физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли занятисем ирттермелли пӳлĕмсене;

пурте усă куракан, пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 3000 тăваткал метртан сахалрах ишмелли бассейнсене;

спортпа курăмлăх сооруженийĕсене, çав шутра искусствăлла пăрлă, пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 3000 тăваткал метртан сахалрах сооруженисене;

пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 3000 тăваткал метртан ытларах физкультурăпа сывлăха çирĕплетмелли комплекссене;

туризм базисене, хăна çурчĕсене, мотельсене, кемпингсене, кану базисене;

пляжсене, шыва кĕмелли вырăнсене, çыран хĕррисене, кану паркĕсене, зоопарксене;

5) коммуналлă хытă каяшсене тирпейлемелли, ĕçе ямалли, сиенсĕрлетмелли, вырнаçтармалли объектсене;

6) культура тата искусство сферине кĕрекеннисене:

муниципаллă архивсене, культура çурчĕсене, халăх канăвне йĕркелекен центрсене, библиотекăсене, кинотеатрсене, музейсене, вырăнти халăхăн йăлана кĕнĕ ӳнер пултарулăхне тата промыслисене аталантармалли муниципаллă округсен, хула округĕсен объекчĕсене, искусство енĕпе вĕренӳ программисене пурнăçлакан муниципаллă вĕренӳ организацийĕсене, вĕсем вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене пăхăнса тăраççĕ е вĕсене вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен йышăнăвĕпе туса хунă;

культурăпа кану паркĕсене;

вырăн (муниципаллă) пĕлтерĕшлĕ культура еткерлĕхĕн объекчĕсене;

7) çут çанталăкпа усă курас тата тавралăх хутлăхне сыхлас ĕç сферине кĕрекеннисене:

муниципаллă округсен, хула округĕсен территорийĕнчи вырăн пĕлтерĕшлĕ сывлăха сиплесе çирĕплетмелли вырăнсене тата курортсене, çавăн

пекех вĕсене тума, аталантарма тата сыхлассине тивĕçтерме палăртса хунă объектсене;

вырăн пĕлтерĕшлĕ уйрăмах сыхламалли çут çанталăк территорийĕсен шутне кĕрекен территорисене;

8) вилнĕ çынна пытарас енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсене йĕркелес ĕç сферине кĕрекеннисене:

пытару вырăнĕсене;

вилнĕ çынна пытарас ыйтусемпе Федерацин "Вилнĕ çынна пытарасси тата пытару ĕçĕ çинчен" 1996 çулхи кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнчи 8-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн ĕçлекен службăсен çурчĕсемпе сооруженийĕсене;

9) коммуналлă хуçалăхпа склад хуçалăхĕн сферине кĕрекеннисене:

муниципалитет харпăрлăхĕ шутланакан гаражсене, паркингсене, нумай хутлă тăраткăчсене;

логистика центрĕсене, комплекссене, склад территорийĕсене, вĕсене тăвасси çинчен калакан йышăнăва вырăнти хăй тытăмлăх органĕ тунă;

10) муниципалла округсен, хула округĕсен вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусем енĕпе полномочисем пурнăçлама тата федераци саккунĕсемпе, Чăваш Республикин саккунĕпе, муниципалла пĕрлĕхсен уставĕсемпе килĕшӳллĕн панă патшалăх полномочийĕсен шайĕнче полномочисем пурнăçлама кирлĕ, муниципалла округсен, хула округĕсен социалла пурнăçпа экономикин аталанăвне палăрмаллах витĕм кӳрекен ытти объектсене тата территорисене.";

8) 10^2 статья хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

9) 11 статьяра:

ятĕнче "поселенин" сăмаха "муниципалла округăн" сăмахсемпе улăштарас;

1-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"1. Муниципалла округăн тĕп планĕн, хула округĕн тĕп планĕн проектне хатĕрлесси çинчен калакан йышăнăва, çавăн пекех вĕсене улшăнусем кĕртмелли сĕнӳсене хатĕрлесси çинчен калакан йышăнăва муниципалла пĕрлĕхĕн вырăнти администраци пуçлăхĕ çирĕплетет.";

2-мĕш пайра "поселени администрацийĕ, хула округĕн администрацийĕ" сăмахсене "муниципалла округăн вырăнти администрацийĕ, хула округĕн вырăнти администрацийĕ" сăмахсемпе улăштарас;

3-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

3[1]-мĕш пайра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

4-мĕш пайра "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

4[1]-мĕш пайра "поселени, хула округĕн территорийĕсенче" сăмахсене "муниципаллă округăн, хула округĕн территорийĕсенче" сăмахсемпе улăштарас, "Чăваш Республикин ĕç тăвакан власть органĕпе" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

7-мĕш пайра "поселени администрацине, хула округĕн администрацине" сăмахсене "муниципаллă округăн вырăнти администрацине, хула округĕн вырăнти администрацине" сăмахсемпе улăштарас;

10-мĕш пая çакăн пек çырса хурас:

"10. Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕн органĕсем, Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсем, Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, интересленекен уйрăм çынсем тата юридически сăпатсем муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăнти администрацийĕн пуçлăхне тĕп плана улшăнусем кĕртесси çинчен калакан сĕнӳсем тăратма пултараççĕ.";

11-мĕш пайра "Поселени администрацийĕ, хула округĕн администрацийĕ" сăмахсене "Муниципаллă округăн вырăнти администрацийĕ, хула округĕн вырăнти администрацийĕ" сăмахсемпе улăштарас;

13-мĕш пайра "е кану зонисене палăртас" сăмахсене ", кану зонисене палăртас е халăх пурăнакан вырăн чиккисем çĕр лаптăкĕсен чиккисем урлă иртнине пĕтерес" сăмахсемпе улăштарас;

çакăн пек çырса 13[1]-мĕш пай хушса хурас:

"13[1]. Халăх пурăнакан вырăн (халăх пурăнакан вырăнсен), территори зонисен чиккисем çĕр лаптăкĕсен чиккисем урлă иртнине Чăваш Республики Министрсен Кабинечĕпе тата муниципаллă пĕрлĕхсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе калаçса килĕшмесĕрех федераци саккунĕпе палăртнă йĕркепе пĕтереççĕ.";

10) 12 статьяра:

2-мĕш пай хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

3-мĕш пайра "поселенин тĕп планне, хула округĕн тĕп планне" сăмахсене "муниципаллă округăн тĕп планне, хула округĕн тĕп планне" сăмахсемпе улăштарас, "поселенин вырăнти администрацийĕн, хула округĕн вырăнти

администрацийĕн" сăмахсене "муниципаллă округăн вырăнти администрацийĕн, хула округĕн вырăнти администрацийĕн" сăмахсемпе улăштарас, "поселенин вырăнти администрацийĕ, хула округĕн вырăнти администрацийĕ" сăмахсене "муниципаллă округăн вырăнти администрацийĕ, хула округĕн вырăнти администрацийĕ" сăмахсемпе улăштарас, "поселенисен, хула округĕсен" сăмахсене "муниципаллă округсен, хула округĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

3^1-мĕш пайра "поселенисен, хула округĕсен" сăмахсене "муниципаллă округсен, хула округĕсен" сăмахсемпе улăштарас, иккĕмĕш предложение кăларса пăрахас;

3^2-мĕш пайра "поселенисен, хула округĕсен" сăмахсене "муниципаллă округсен, хула округĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

3^3-мĕш пайра "поселенисен, хула округĕсен" сăмахсене "муниципаллă округсен, хула округĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

3^4-мĕш пайра "поселенисен, хула округĕсен" сăмахсене "муниципаллă округсен, хула округĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

11) 13 статьяра:

1-мĕш пунктра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

2-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

"2) хула строительствине проектламалли вырăнти нормативсем, вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

а) хула строительствине проектламалли муниципаллă округ нормативĕсем;

ă) хула строительствине проектламалли хула округĕн нормативĕсем.";

12) 14 статьяра:

1-мĕш пайра "Республика" сăмаха "Регион" сăмахпа улăштарас;

2-мĕш пайра "Республика" сăмаха "Регион" сăмахпа улăштарас, "3-мĕш тата 4-мĕш пайĕсемпе" сăмахсене "4-мĕш пайĕпе" сăмахсемпе улăштарас;

3-мĕш пай хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

4-мĕш пайра "поселенин, хула округĕн" сăмахсене "муниципаллă округăн, хула округĕн" сăмахсемпе улăштарас;

4^1-мĕш пайра "1-мĕш, 3-мĕш тата 4-мĕш пайĕсенче" сăмахсене "1-мĕш тата 4-мĕш пайĕсенче" сăмахсемпе улăштарас;

5-мĕш пайăн 1-мĕш пунктĕнче "1-мĕш, 3–4[1]-мĕш пайĕсемпе" сăмахсене "1-мĕш, 4-мĕш тата 4[1]-мĕш пайĕсемпе" сăмахсемпе улăштарас;

7-мĕш пайра "Республика" сăмаха "Регион" сăмахпа улăштарас;

13) 15 статьяра:

ятĕнче "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

1-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

2-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

3-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

3[2]-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

4[1]-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас, "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

5-мĕш пайра "Республикăн" сăмаха "Регионăн" сăмахпа улăштарас;

6-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас, "администрацине" сăмаха "вырăнти администрацине" сăмахсемпе улăштарас, "район" сăмаха "округ" сăмахпа улăштарас;

7-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

8-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

9-мĕш пайра "республика" сăмаха "регион" сăмахпа улăштарас;

14) 16 статьяра:

2-мĕш пайăн 3-мĕш пунктĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕн" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕн" сăмахсемпе улăштарас;

4-мĕш пайра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕсен" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕсен" сăмахсемпе улăштарас;

15) 17 статьяра:

1-мĕш пайра "муниципаллă районсен территорине планламалли схемăсемпе" сăмахсене кăларса пăрахас, "поселенисен" сăмаха "муниципаллă округсен" сăмахсемпе улăштарас;

5-мĕш пайра "муниципаллă район территорине планламалли схемăпа," сăмахсене кăларса пăрахас, "поселенин" сăмаха "муниципаллă округăн" сăмахсемпе улăштарас;

16) 18 статья хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

17) 19 статьяра:

2-мĕш пайра "районсен" сăмаха "округсен" сăмахпа улăштарас;

2[1]-мĕш пайра "районсен" сăмаха "округсен" сăмахпа улăштарас.

2 статья

1. Çак Саккун, çак статьяпа урăх вăхăтра вăя кĕртме палăртнă положенисемсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 9-мĕш пункчĕн вун тăваттăмĕш – вун улттăмĕш абзацĕсем 2024 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ
78 №